**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования Чувашской Республики**

**Администрация Красночетайского муниципального округа**

**МБОУ "Мижеркасинская ООШ"**

| РАССМОТРЕНО | СОГЛАСОВАНО | УТВЕРЖДЕНО |
|---|---|---|
| Педсоветом | ШМО учителей | И.о. директора |
| | | В.В. Данилов |
| Протокол № 1<br>от «29» августа 2023 г. | Протокол № 1<br>от «29» августа 2023 г. | Приказ № 83/2-В<br>от «30» августа 2023 г. |

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

**учебного предмета «Чувашская литература)»**

для обучающихся 1 класса

## с. Мижеркасы 2023

| Раздел теми, сехет шучĕ | № п/п | Урок теми | Кăмăл-сипете аталантарасси | Универсаллă вĕренӳ ĕç-хĕлĕсем | Предмет ăшĕнчи пĕлӳ, хăнăху | Ачасен ĕç-хĕлĕ | Хушма материал |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Литература вулавĕ. 1-мĕш чĕрĕк (9 сехет)** | | | | | | | |
| **Шкула каяр-ха вĕренме. (2 сех.)** | 1. | Эпĕ халĕ шкул ачи. | Ачасене вĕсен пурнăç йĕрки мĕнле улшăнни çинчен калаçтарни, шкул ачин яваплăхĕпе, тивĕçĕсемпе паллаштарни, шкула юратма вĕрентни. | Ачасене кун йĕркине пăхăнма, учитель вуланине итлеме тата ăнланма, хăйсен туйăмĕсене сăнаса пама хăнăхтарни. | Шкул йĕркисемпе паллаштарни, вĕсене ăнланса, ăса хывса куллен пурнăçлаттарни.Çыхăн уллă калаçма вĕрентни. Хайлав тата илемлĕ хайлав ăнлавсемпе паллаштарни, вĕсене туйма, ăнланма вĕрентме пуçласси. | «Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ» кĕнекепе паллашни, «Эпĕ халĕ шкул ачи» калаçу ирттерни. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева , Г.Ф.Трофимова/ Стр.279 |
| | 2. | Хайлав. Илемлĕ хайлав. | Кĕнекери сăнарсемпе туслашни, шкул ачин тивĕçĕсене асăмласа çирĕплетни. | | | | |
| **Халăх сăмахлăхĕ. (4 сех.)** | 3. | Халăх сăмахлăхĕ (сăвви-юрри) | Пуплешӳ, чĕнӳ-йыхрав, шутлав сăввисене мĕнле тĕллевпе каланине, | Кун пек сăвăсене кашни сасса, кашни сăмаха такăнмасăр, | Халăх сăмахлăхĕнчи тĕрлĕ сăвăсене танлаштарма, вĕсене кăмăл-туйăма палăртса, | Килĕшнĕ сăвă тăрăх ӳкерчĕк тăвасси. Шутлав | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | 4. | Чĕнӳ-йыхрав сăвви-юрри. Шутлав сăввисем | мĕнле йĕркеленсе пынине аталантарни. Тупмалли юмахсен хăйьевĕрлĕхне, тытăмне сăнатарни. Вĕсемпе пурнăçра выранлă усă курма вĕрентни. | уçăмлă каламаллине палăртни. Мăшăрпа ĕçлеме хăнăхтарни. | хăвăрткаларăшсене такăнмасăр калама вĕрентни, артикуляцие çирĕплетни. Тупмалли юмахсем икĕ пайран тăнине, кашни пайĕнче ытарлăх пуррине палăртасси. Вĕсене хайланă чухне танлаштару тата сăпатлантару мелĕсемпе усă курма вĕрентни. | сăввисене аса илсе вăйă вылясси. . | , Г.Ф.Трофимова/ Стр.186-202 |
| | 5. | КТВ.А.Отачкин. Шкула. Ю.Силэм.Тимлĕ итленĕ. | | | | | |
| | 6. | Хăвăрткаларăшсем. Тупмалли юмахсем. | | | | | |
| **Юмах юпа тăрринче … (1 сех)** | 7. | Юмахсем. «Пукане юмахĕ», «Упапа хĕр ача». | Пурнăçра чеерех те тавçăруллăрах пулма вĕрентни. Юмах тытăмĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсене уçăмлатма пулăшасси. | Ыйтусене ăнланма, вĕсене хуравлама, хăйсен шухăшне уçăмлă палăртма вĕрентни. Юмахсене вуланă чух тимлĕ пулмаллинекалани. | Юмах жанрĕн хăйьевĕрлĕхне ăнлантарма пуçласси. Ачасене юмах логикине, сюжетне сăнатарасси. | «Кам юмахçă пуласшăн?» вăйă вылясси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.205-216 |
| **Вăйă вылятпăр. (2 сех.)** | 8. | Сăвăласа çырнă хайлавсем. | Ачасене сăвăлласа çырнă хайлавсемпе паллаштарасси. Сăвăç пире тĕнчене урăхларах курма пулăшнине ăнлантарни. | Итленĕ хайлавсен шухăшĕсене каласси, ыйтусем лартасси, туллин хуравласси. | «Рифма» ăнлава (термина асăнмасăр) уçăмлама пулăшасси, «автор», «сăвăçă» ăнлавсемпе паллашасси. | «Пĕрле вĕçлер-ха» вăйă вылясси. . | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.191 |
| | 9. | Çыравçă хайланă юмах. В.Сутеев «Шăшипе кăранташ» юмахĕ. | | | | | |
| **2 – мĕш чĕрĕк (7 сехет)** | | | | | | | |
| | 10 | КТВ. В.Давыдов-Анатри.Таван сершыв. | Таван сершыва юратма, хисепеме верентесси. | Ваттисен самахесемпе еслесси, весене анлантарасси. | Таван сершыв синчен каласа парасси. | Таван яла укересси, санласа парасси.. | «Чевелти» С.10-18 |

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| **Теттесем. (1 сех.)** | 11. | Шӳтлӗ сăвăсем. П.Çăлкуç «Ăмсанса пăхать Кампур», М.Волков «Пăрçа хуралçисем», Н.Карай «Пулăра» | Шӳте ăнланма, ачасене хăйсене те шӳтлеме вӗрентсе пырасси. | Ачасем хăйсемпе кулăшла пулса иртнӗ самантсене аса илсе каласа парасси. Группăсемпе ӗçлеме хăнăхтарни. | Сăвăлласа çырнă хайлавсене итлеме, туйма-ăнланма малалла вӗрентесси. | Словарь ӗçӗ. «Хăш ушкăн нумайрах ыйту парать?» вăйă вылясси. | «Пӗчӗккисен кӗнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.192,236 |
| **Ачасем çинчен. (2 сех.)** | 12. | Прозăпа çырнă хайлавсем.«Калав»ăнлав. ( Н.Ишентей «Хуплу пӗçерни», П. Яккусен «Анне», И.Микулайӗ «Арбуз» суйласа ил) | Ачасене хутшăну этикечӗн ансат йӗркисемпе паллаштарни, хутшăнупа çыхăннă хăш-пӗр ăнлавсене уçăмлатни. Атте-аннене юратма вӗрентни. Пӗчӗкренех ӗçе хăнăхтарни. | Ачасем хăйсен шухăшне тӗрӗс те туллин пӗлтересси, сăнарсен тата хăсен ӗçне хаклама пӗлесси. | Калав мӗн çинчен пулнине ăнланма, калав темине уçăмлатма вӗрентесси. Калав темипе унта мӗн калани, ячӗ мӗнле çыхăннине, калав ятӗнче унăн теми палăрнине ăнлантарасси. | Словарь ӗçӗ. | «Пӗчӗккисен кӗнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.224 |
| | 13. | Калавра мӗн çинчен калани. Калав ячӗ. Л.Сарине «Арман авăртать» | | | | | |
| **Чӗр чунсем çинчен. (3 сех.)** | 14. | Юптару. П.Çăлкуç «Хур аçи», Ю.Мишши «Лашапа кашкăр». | Мӗн çинчен те пулин шахвăртса, юптарса каласа кăтартнине, юптарусенче чӗр чунсем çынсем пекех калаçнине туйса илме пулăшасси. Чӗр чунсене юратма , пӗр-пӗрипе туслă пулма вӗрентни. | Юптарусене илемлӗ, палăртуллă вуламаллине каласа хăварни. Вӗсенчи сăнарсене хаклама хăнăхтарни. | «Юптару» ăнлава уçăмлаттасси, çак жанр хăйьевӗрлӗхне сăнатарасси, ăса хывтарасси; ку жанрпа çырнă хайлавсене ыттисенчен уйăрса илме вӗрентесси. | Словарь ӗçӗ. | «Пӗчӗккисен кӗнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.227 |
| | 15. | КТВ. Г.Ирхи. Асамат кепере. Тетре. | | | | | |
| | 16. | О.Печников «Усала вӗрентнӗ путек», Е.Чарушин «Томка тӗлӗкӗсем». В.Сутеев «Кăмпа айӗнче». | | | | | |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Тавралăх – асамлă тěнче. (1 сех.)** | 17. | А.Пăртта «Çумăр ташши», А.Ыхра «Пукан», Л.Сарине «Вăрманта». | Çутçанталăкри пулăмсене, чěр чунсене сăнама, итлеме,тимлеме хăнăхтарса пырасси. | Хăйсем тěллěн калав тăвасси, сăввине илемлě,палăртуллă вулани. | Пурнăçра кашни япалан, кашни пулăмăн ячě пуррине ăнлантарасси. Хайлавсенеятпамавěрен тесси. | Пěр-пěрчěрчун çинченкалавтăвасси. | «Пěчěккисенк ěнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.259 |
| **3- мěш чěрěк (10 сехет)** | | | | | | | |
| **Килсе çитрě хаваслă хěл. ( 3 сех.)** | 18. | В.Эктел «Юр», П.Çăлкуç «Ытарми хěл», Л.Смолина «Тăвайкки». | Хěллехи çутçанталăка сăнама, юратма вěрентни.Юмахра чăн пурнăçра пулма пултарайман ěçсем çинчен каланине ăнлантарни. | Ачасен илемлě, палăртуллă вулавне аталантарасси, вуласа тухни тăрăх ыйтусем лартасси тата вěсем çине туллин хуравласси. Ачасем хăйсен ěçне хаклама пěлесси. | «Строфа» ăнлава уçăмлатасси, сăвăçсем чěрě маар япаласене чěрě пек туса кăтартни сăвăсене курăмлăрах, витěмлěрех тунине, пěр шухăша тем тěрлě те палăртма пултарнине ăнлантарни. | Сăвă çаврăмěсемпе ěçлесси.<br><br>Тăвайккинче ярăнни çинчен ўкерчěк тăвасси.<br><br>Учебникри ыйтусемпе ěçлени. | «Пěчěккисен кěнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.143 |
| | 19. | В.Эктел «Хěл Мучи», П.Çăлкуç «Тăвайкки», Е.Кузнец «Çеменпе Сивě Мучи». | | | | | |
| | 20. | КТВ.Г.Мальцев. Урай шални.В.Раштав. Шарпак перчи. | | | | | |
| **Ача – пăча сăмахлăхě (2 сех.)** | 21. | Кулленхи сăвă-юрă. Чěнў-йыхрав сăвви-юрри, хăвăрт сăмах, тупмалли юмахсем. | Пўплешўллě сăвăсене, пулмасла такмаксене мěнле тěллевпе каланине, вěсем мěнле йěркеленнипе паллаштарасси, тупмалли юмахсен хăйьевěрлěхне, тытăмне сăнатарасси. Вěсемпе выăнлă усă курма хăнăхтарасси. | Ачасене рольпе вулама хăнăхтарасси. Çакăн евěр хайлавсене вуланă чух тимлě пулма вěрентни. | «Ача-пăча сăмахлăхě» ăнлавне уçăмлатасси. «Тема», «автор» терминсемпе паллаштарасси. Халăх сăмахлăхěнчи юмах-халапсен, сăвă-юрăсен, шўтсен пěтěмěшле авторě халăх пулнине ăнлантарасси. | Словарь ěçě.<br><br>Чěнў-йыхрав сăвви хайласси, тупмалли юмах ăсласси.<br><br>Вěçсěр такмак сăвăласси. | «Пěчěккисен кěнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.189-199 |
| | 22. | Пулмасла халап. Вěçсěр такмак. Шўт. | | | | | |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Юмах ятăм, юптартăм. (1 сех.)** | 23. | Улăп халапĕсем. «Тилĕпе Качака таки». | Ачасене ăс-хакăл пухма, ырă та тÿрĕ чунлă пулма, пурнăç çине чĕрĕ куçпа пăхма вĕренме пулăшасси, чăваш халăх юмахĕсенче çынсен кăмăлне чĕр чунсенче кăтартнине ăнлантарасси, пĕр-пĕринпе туслă пурăнма вĕрентни. | Юмахри сăнарсене хаклама пĕлесси. Ачасем хăйсен шухăшне тĕрĕс те туллин пĕлтерни. | Юмахсене илемлĕ – сасса кирлĕ пек улăштарса, харпăр хăй унта пулса курнă евĕр каласа пама хăнăхтарасси, юмаха пурнăçпа çыхăнтарма вĕрентесси. | Учебникри ыйтусемпе ĕçлесси. Словарь ĕçĕ. «Çарăк» юмаха лартса парасси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева , Г.Ф.Трофимова/ Стр.205-215 |
| **Пирĕн вăйă-кулă (1 сех.)** | 24. | Л.Сорокина «Пукане», Ю.Силэм «Шак-шак-шак», Р.Сарпи « Ташлать Илемпи». | Туссен пĕр-пĕрне пулăшмаллине, вĕрентнĕ чух кăмăллă та ăшă пиллĕ пулмаллине хăнăхтарасси. | Хайлавсенчи сăнарсене хаклама пĕлесси. Ачасен илемлĕ, палăртуллă вулавне аталантарасси, вуласа тухни тăрăх ыйтусем лартасси тата вĕсем çине туллин хуравласси. | Сăвăпа калава уйăрма вĕрентесси, паллă калавçă сăвăçсемпе паллаштарасси. | Словарь ĕçĕ. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева , Г.Ф.Трофимова/ Стр.217 |
| **Ачасем çинчен ( 3 сех.)** | 25. | КТВ.Юмах юпа тарринче. Чахапа услам су. Чаваш халах юмахе. | Чăвашсем ĕçчен халăх пулнине, ачисене çамрăклах ĕçе хăнăхтарнине, аслисен сăмахне итлемеллине, тăвансене пулăшмаллине, ваттисене хисеплемеллине, хăйсене çын çинче | Ыйтусене ăнланма, вĕсене хуравлама, хăйсен шухăшне уçăмлă палăртма вĕрентесси. | «Калуллă текст», «тĕп сăнар» ăнлавсене уçăмлатасси. Калавăн пайĕсемпе паллаштарасси, вĕсене уйăрма вĕрентесси. | «Пĕрле вĕçлер-ха» вăйă вылясси. Килĕшнĕ калав патне ÿкерчĕк тăвасси. Ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлесси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева , Г.Ф.Трофимова/ Стр.236 |
| | 26. | В.Голявкин «Инкек», Р.Сарпи.«ÿкерчĕк». А.Ыхра калавĕсем, Н.Карай «Макăрмарĕ». | | | | | |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | 27. | М.Салихов «Усăллă кану», В Осеева «Ырă ĕç», Н.Рогачёв «Пулăçсем». | тирпейлĕ тытмаллине палăртса хурасси. | | | | |
| **Чĕр чунсем çинчен (3 сехет)** | 28. | И.Яковлев «Хураçка», А.Ыхра«Шурка»,Е.Чару шин «Томка ишме вĕренни». | Чĕр чунсене юратма , вĕсем те çынсем пекех туйма пултарнине, хăйсене майлă ăсĕ пуррине палăртма вĕрентесси. | Хайлавсем патне ыйтусем лартса, хуравсене тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пĕтĕмлетӳ тăвасси. | Калаври тĕп сăнарсене тупасси, ăна пайсем çине уйăрассине çирĕплетсе хăварасси. | Словарь ĕçĕ. Тупмалли юмахсемпе ĕçлесси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева , Г.Ф.Трофимова/ Стр.237 |
| | 29. | К.Чуковский «Чĕрĕп кулать», Э.Шим «Шапапа калта», «Пакшапа пăрăнтăк». | | | | | |
| | 30. | КТВ. Г.Мальцев Ытарайми анне. Ю.Силэм. Кавак сурах. | | | | | |
| **Тавралăх – асамлă тĕнче (3сех.)** | 31. | Комплекслă тĕрĕслев ĕçĕ. | Вулав хăвăртлăхне тĕрĕслесси. | Ачасен илемлĕ, палăртуллă вулавне аталантарасси, вуласа тухни тăрăх ыйтусем лартасси тата вĕсем çине туллин хуравласси. Ачасем хăйсен ĕçне хаклама пĕлесси. | «Сăнлав» ăнлава уçăмлатасси, çутçанталăкри пулăмсене е япаласене сăмахсемпе хитре ӳкерчĕксем пек çырса кăтартнине ăнлантарасси. | «Çуркунне темăпа сăмахлă ӳкерчĕк тăвасси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева , Г.Ф.Трофимова/ Стр.241 |
| | 32. | С.Соколинский «Çумăр», П.Çăлкуç «Çумăр умĕн». | Тавралăха юратма , мĕнле улшăннине сăнама вĕрентни. | | | Тупмалли юмахсемпе ĕçлесси. | |
| | 33. | А. Ыхра «Çурхи илем». Х.Çеменĕ «Çуркунне». В.Тарават «Кăнтăр çĕршывĕнче». | | | | | |

**Умĕн калани**

Литература вулавепе пĕрремĕш класс ачисене вĕрентмелли ес программине сак документсене тепе хурса йеркелене**:**

1. Федеральный закон «Об образовании в Российской Федерации №273-ФЗ от 29.12.2012 года;
2. Федеральный государственный образовательный стандарт начального общего образования
3. Основная образовательная программа начального общего образования МБОУ «Бичурга-Баишевская СОШ»
4. «Тăван чĕлхе программи: чăваш шкулĕн 1-4 классем валли» М.К. Волков, Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, О.И. Печников, Р,Н. Петрова, Д.С.Филиппова. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви, 2008.- 88 с.»

2011 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пуçламăш шкулта çĕнĕ патшалăх федераллă вĕренӳ стандарчĕ вăя кĕрет. Стандарт кĕçĕн классенче вĕренӳ ĕçĕн тĕрлĕ енĕсене йĕркелесе тăракан тĕп документ пулса тăрать.

Ку вĕренӳ çулĕнчен пуçласа вĕрентӳ программисемпе вĕрентӳпе меслетлĕх комплекчĕсем çĕнĕ стандарт ыйтнине тивĕçтермелле. Паллах, пĕр харăсах кашни предметпа пур классем валли те çĕнĕ кĕнеке-пособи калăпласа кăларма та, малтанхисене çĕнетсе йĕркелеме те май çук. Хальлĕхе Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви халиччен шкулсенче усă курнă кĕнекесемпех ĕçлеме ирĕк парать. Çĕнĕ вĕрентӳ хатĕрĕсене малашне çулсерен пĕр класс хыççăн теприне пичетлесе пыма палăртнă. Ĕçе çĕнĕ стандартра палăртнă тăрăх çĕнĕлле йĕркелеме тивет. Ятарлă вĕрентӳпе меслетлĕх комплекчĕ хатĕрлесе çитериччен 1-мĕш класра литература вулавне йĕркелесе пыракан документ вырăнне çак меслетлĕх кăтартăвĕсем пулмалла.

Кунта «литература вулавĕ» предметăн вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшне, тĕллевĕсемпе задачисене çырса кăтартнă. Предмета вĕрентнĕ май ачасем туянмалли компетенцисемпе Вĕрентĕвĕн Универсаллă Действийĕ (малалла:ВУД; вырăсла: УУД –Универсальное Учебное Действие) палăртнă, хальлĕхе усă курма юрăхлă вĕрентӳ хатĕрĕсене пахаласа хакланă. Çавăн пекех тĕслĕхлĕ вĕрентӳ ĕç программине тапхăрăн-тапхăрăн пайласа панă.

**«Литература вулавĕ» предметăн 1-мĕш класс ачисене вĕрентсе ăс парас тата воспитанипарас ĕçри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ**

Патшалăх базис программипе килĕшӳллĕн 2006-мĕш çултан пуçласа чăваш наци пуçламăш шкулĕсен вĕрентӳ планне «Литература вулавĕ» предмета кĕртнĕччĕ. Ку предмет маларахри вулав урокĕсен вырăнне йышăнчĕ. 1-мĕш класра литература вулавне еплерех йĕркелесе ирттермелли çинчен çапла каланăччĕ: «Пĕрремĕш çур çулта, ачасен вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитиччен, букварь умĕнхи тапхăрта тата букварь урокĕсенче эрнере 15-20 минут литература итлевĕ ирттермелле. Иккĕмĕш çур çулта эрнере пĕрре литература вулавĕн урокĕ пулмалла». (Артемьева Т.В. Литература вулавĕн урокĕсем: 1-мĕш класс: меслет сĕнĕвĕсем Т.В.Артемьева, О.И.Печников. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн центрĕ, 2009. 13 с.) Программăра палăртнă тăрăх, «литература вулавĕ пуçламăш шкулăн чи пысăк икĕ тĕллевне пĕрлĕхлĕн татса пама май парать: пĕрремĕшĕнчен, вулама тата кĕнекене юратма хăнăхтарать, иккĕмĕшĕнчен, литература хайлавне ăнланма тата унпа ĕçле вĕрентет». (Тăван чĕлхе программи: чăваш шкулĕн 1-1У класĕсем валли (М.К.Волков, Л.П.Сергеев, Т.В.Артемьева, О.И.Печников, Р.Н.Петрова, Д.С.Филиппова. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви, 2008. 7 с.)

**Предметăн вĕрентӳ планĕнчи вырăнĕ**

Çĕнĕ вĕрентӳ стандартне пăхăнса, 1-мĕш класра чăваш чĕлхине вĕрентме палăртнă сехетсене эрнере çапларах пайламалла: вулама-çырма вĕрентмелли уроксем – 4; литература вулавĕн урокĕсем – 1. - 33 сехет)

**Вĕренӳ предмечĕн пĕтĕмĕшле характеристики**

«Литература вулавĕ» чăваш пуçламăш шкулĕсенче çĕнĕ предмет. Юлашки вăхăтра ун тавра калаçу чылай пулчĕ. Семинарсемпе конференцисенче, тĕрлĕ çавра сĕтелсенче, меслетлĕх журналĕн страницисенче, меслетлĕх кăтартăвĕсенче ку ыйтăвăн тĕрлĕ енĕсене сӳтсе явма тиврĕ. Тĕпрен илсен çак шухăш çирĕпленчĕ: литература вулавĕ - техникăллă вулавран илемлĕ сăмах тĕнчине куçмалли çул-йĕр. Меслетçĕсем вăл пуçламăш шкулта тĕп

гуманитари предмечӗ пулнине, предметӑн харкам задачисене татса панипе пӗрлех ытти предметсен ачан гуманитари аталанӑвӗпе ҫыхӑннӑ пӗрлӗхлӗ задачӑсене те тимлемеллине палӑртаççӗ. Ку вӑл чи малтан шкул ачин харкамлӑхне, унӑн ӑславлӑ пултарулӑхне, кӑмӑл-сипетпе иле- млӗх туйӑмӗсене аталантарассипе ҫыхӑннӑ.

Вӗрентӳпе аталантару тата сапӑрлав (воспитани) задачисене татса панӑ чухне илемлӗ сӑмахлӑхпа пуплевре усӑ курас мехелпе анлӑ усӑ курасси вӗрентекенсемшӗн те, ашшӗ-амӑшӗсемшӗн те яланах пӗлтерӗшлӗ ыйтусенчен пӗри пулнӑ. Хальхи вӑхӑтра, ачасем сахал вуланӑ, вӗрентӳ условийӗсем ҫӗнелсе улшӑннӑ тапхӑрта, асӑннӑ ыйту ҫивӗчлӗхӗ тата ӳссе кайрӗ. Ачасем илемлӗ литературӑпа кӑсӑкланманни, илемлӗ литература хайлавӗсене суйласа илме, йышӑнма, вуласа ӑнланма, хак пама пӗлменни аслисене хытӑ пӑшӑрханать.

Ачасен вулавҫӑ культурине ӑнӑҫлӑ хӑнӑхтарса пырсан вӗсен пурнӑҫӗнче илемлӗ литература, илемлӗ сӑмахлӑх витӗмӗ пысӑкланса каять. Илемлӗ литература этемӗн кӑмӑл-туйӑмне вӑратакан, хускатакан, йӗркелекен хатӗрсенчен пӗри. Вӑл ачан шухӑш вӗҫевне, ӑслав пултарулӑхне аталантарать, ӑс-тӑна ҫивӗчлетет. Вулав, уйрӑмах илемлӗ литературӑна вулани, этеме харкам тӗллӗнех аталанса пыма май паракан хӑватлӑ хатӗр.

Пуҫламӑш классенче «литература вулавӗ» предметӑн пӗлтерӗшӗ уйрӑмах пысӑк, мӗншӗн тесен шӑпах ҫак вӑхӑталла этемӗн ӑс-хакӑлпа кӑмӑл-сипет пахалӑхӗсем, ӗҫ-хӗл тӗсӗсем никӗсленеççӗ, психикӑн ытти мӗн-пур функцийӗсем ҫирӗпленсе аталанма пуҫлаççӗ.

Нумай вулани, вуланине итлени ачан ӑс-тӑнне ҫивӗчлетет. Вӑл вӗренӳре кирлӗ ӑслайсене ӑнӑҫлӑрах алла илсе пырать. Илемлӗ литературӑна чуна хывасси ӑспа кӑна мар, сисӗм-туйӑм урлӑ та пулса пырать. Ҫавӑнпа илемлӗ хайлавсемпе паллаштарни ачан кӑмӑл-сипет тата илемлӗх туйӑмӗсене (тараватлӑх, савӑнса киленни, тӗлӗнни, сапӑрлӑх т.ыт.те.) аталантармалли паха услови те пулса тӑрать. Илемлӗ сӑнара, чӗлхен илемлӗхпе сӑнарлӑх мелӗсемпе хатӗрӗсене ӑнланас тесен мӗн вуланине ӑсра курма пултармалла. Ҫавӑнпа литература вулавӗн урокӗсенче ачасен сӑнарлӑ шухӑшлавне аталантарассипе ҫыхӑннӑ ыйтусене ӑнкарса татса пама майсем ытларах.

1-мӗш класра «Литература вулавӗ» вӗренӳ предмечӗ кӑна мар, вӑл ача-пӑча аталанӑвне тата воспитани ӗҫне витӗм кӳрекен хӑватлӑ хатӗр те. Литература ҫӳпҫи кӑмӑл-туйӑмпа ӑс-хакӑл пахалӑхӗсене аталантармалли майсемпе мелсем тӗлӗшӗнчен питӗ пуян. Илемлӗ сӑмах, сӑнарлӑ пуплевӗн палӑрту хатӗрӗсемпе мелӗсем шкул ачисене культура тӗлӗшӗнчен аталантармалли никӗс. Гражданлӑх тата патриотизм воспитанийӗн никӗсӗ те – литературӑн паха хайлавӗсене вуланинче.

Уроксенче паллашакан хайлавсем ачасен ӑс-хакӑлӗнче таврари тӗнче ҫинчен пӗлӳсем калӑплама пулӑшаççӗ: сӑнарсем, ӑнлавсем, идейӑсем урлӑ. Ачасем хайлав содержанийӗпе паллашнӑ май сӑнарсем тӗнче ҫине мӗнле куҫпа пӑхнине, вӗсен шухӑш-кӑмӑлне, ӑс-хакӑл пахалӑхӗсене сӑнаса ӑса хываççӗ. Вӗсен хӑйсен Тӑван ҫӗршыв, тӑван тавралӑх, этем тата этемлӗх ҫинчен пуҫламӑш ӑнлавсем ҫуралса йӗркеленеççӗ.

**Вулав урокӗсенче воспитани задачисем анлӑнрах, ӑнӑҫлӑнрах пурнӑҫланса пыраççӗ.** Ӑсӗпе вулавҫӑ хӑй мӗн вуланине чӗри витӗр кӑларать, лайӑххипе япӑххине, ыррипе усаллине уйӑрма хӑнӑхать. Ку пахалӑхсем пуҫламӑш классенчех никӗсленсе аталанма пуҫламалла. Илемлӗ хайлавсене тимленӗ, ӑса хывнӑ май ача-пӑчан кӑмӑл-сипет, ӑс-хакӑл тата туйӑм опычӗ пуянланса аталанать

Илемлӗ хайлавсене вуласа унти сӑнарсен хӑтланӑшӗсене, кӑмӑл-туйӑм хусканӑвӗсене сӑнанӑ-тишкернӗ ачасем ҫут ҫанталӑкри, ҫынпа ҫын, ҫынпа ҫут ҫанталӑк хушшинчи хутшӑнусене туйма, хаклама, вӗсен илемне курма хӑнӑхса пыраççӗ, харкам хутшӑнӑвӗсене килӗшӳллӗрех йӗркелеме хавхаланаççӗ. Ҫакӑ ачасем шкул картине кӗрсенех, пӗрремӗш класрах пуҫланать.

Илемлӗ литература социаллӑ пурнӑҫа, ҫут ҫанталӑка сӑнарласа сӑнлать.Ҫавӑнпа унӑн витӗмӗ те вӑйлӑрах, ҫивӗчрех.

**Предмета вӗрентнӗ май планлакан результатсем**

Стандартра вӗренӳ вӗҫленнӗ тӗле ачасен мӗн пӗлменнине, вӗсен ӗҫ результачӗсем мӗнле шайра пулмаллине те кӑтартнӑ. Вӗсене тӗпрен илсен виҫӗ ушкӑна уйӑрнӑ. Харкам (личностные) результатсем ачасем хӑйсен социумри вырӑнне ӑнланассипе, вӗсен тӗнче курӑмне йӗркелессипе, тӗрлӗ халӑх ҫыннисен культурине ӑнланса йышӑнма, тантӑшӗсемпе тата аслисемпе тӗрлӗ лару-тӑрура хутшӑнма вӗрентессипе, вӗренӳ ӗҫне сӑлтавлама, вӗренекен яваплӑхне ӑнланса ӑса хывма пулӑшассипе ҫыхӑнса тӑраççӗ.

Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (метапредметные) содержанийĕнче палăртнă ăслай-хăнăхусем, компетенцисем пуçламăш шкулти ытти предметсене вĕрентнĕ май йĕркеленсе пымалла. Ку вăл ачасене вĕренӳ тĕллевĕпе задачисене ăса хывма, асра тытма, вĕсене татса пама май паракан çул-йĕре шырама вĕренсе пырасси; вĕренӳри тĕп ăнлавсене уçăмлассси; вĕренӳ ĕçĕмĕсене (учебные действия) алла илесси.

Уйрăм предметăн ятарлă результачĕсем пĕр-пĕр предмета вĕрентнĕ май йĕркеленекен ятарлă ăслай-хăнăхусем, компетенцисем кĕреççĕ. Пĕрремĕш класра литература вулавне вĕрентнĕ май çак результатсене планлама пулать.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- вĕренекенсем ăс-тăн тĕлĕшĕнчен аталанса пыни;
- пуплев ĕç-хĕлĕн пур тĕсĕсене те алла илсе малалла çивĕчлетни;
- ятарлă ăнлавсемпе терминсен пĕлтерĕшне уçăмласа ăса хывма хăнăхса пыни;
- ачасен ăслав пултарулăхĕ аталанни;
- вĕренӳ ăслай-хăнăхăвĕсем йĕркеленме пуçлани

**Предметăн харкамлăх результачĕсем:**

- вĕренекенсен социаллă тата кăмăл- сипет опычĕ пуянланни;
- тăван халăх тата кӳршĕ халăхсен культурине хисеплеме, пуринпе те тӳсĕмлĕ те çураçуллă пулма хăнăхса пыни;
- ачасем çитĕнсен мĕн-пур этемлĕхĕн литература пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме вĕренсе пыни;
- вулав хатĕрĕсем урлă ачасен чунĕнче гражданлăхпа патриотлăх, çынлăх, тивĕçлĕхпе яваплăх туйăмĕсем аталанса пыма пуçлани, пурнăçра лайăххипе япăххине, ыррипе усаллине чухлама вĕренсе пыни.

**Предметăн ятарлă результачĕсем:**

- ачасен хăйсен ӳсĕмне тивĕçтерекен литература хайлавĕсене итлес-вулас кăмăлĕ амаланни;
- калăпăшĕпе пысăках мар, ансат сюжетпа интригăллă, тĕрлĕ жанрлă илемлĕ хайлавсене тăнласа е вуласа ăнланма, туйса илме вĕренсе пыни;
- илемлĕ хайлав çинчен пĕтĕмĕшле ăнланни. Проза тата поэзи хайлавĕсен хăй евĕрлĕхне туйма вĕренни;
- литература жанрĕсем çинчен пĕтĕмĕшле ăнланăвĕ тарăнланса пыни;
- илемлĕ хайлавпа ĕçлемелли пуçламăш хăнăхусем калăпланни, хайлавсен содержанине ăса хывмалли тата асăмламалли мелсене вĕренсе пыни;
- ача хăй те хайлав ĕçне явăçма сĕмленни;
- сăмах искусствипе киленме вĕренсе пыни;
- литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе паллашни.

Эпир 1-мĕш класс вĕçнелле ачан çак ВУДсем калăпланса çитессе кĕтетпĕр:

Пĕлӳсем туянас (познавательный) ВУДсем тĕлĕшĕнчен илес пулсан, ача вĕренӳ кĕнекине чухлама, йышăннă паллăсене ăнланма вĕренсе çитет; текстра палăртнă вырăнсемпе йĕркесене тата сăмахсене тупса вулама пуçлать; тивĕçлĕ ӳкерчĕксемпе текст сыпăкĕсене шайлаштарма хăнăхать; информацин икĕ çăлкуçĕпе (вĕренӳ кĕнеки тата «Ĕç тетрачĕ») ĕçлеме, вĕсенчи йышăннă паллăсене танлаштарма, вĕсемпе усă курма, кĕнекесенчи палăртнă вырăна тупма вĕренет.

Харкамлă ВУД енчен пăхас пулсан, ача кăмăлпах вĕренме хăнăхать. Мĕн пĕлни çумне пĕлменнине хушса пыма пуçлать, вĕренӳри йывăрлăхсене чухлать, хăй пурнăçлакан тата хутшăнакан ĕçсен пурнăçри вырăнне чухлакан пулать. Хăйне Россия обществин, чăваш халăхĕн пĕр уйрăлми тĕпренчĕкĕ пек туйма вĕренет, çывăх тăванĕсемпе тус-тантăшне, ваттисене хисеплеме, вĕсен шухăш-кăмăлне уяма хăнăхать.

Регулятивлă ВУД енчен пăхсан, шкул ачи пĕр ыйтăвах тĕрлĕлле хуравлама май пуррине ăша илет, хăй шухăшĕпе килĕшӳллĕ текст илсе кăтартма хăнăхать.

Хутшăну (коммуникативлă) ВУДсем. Шкул ачи вĕренсе çитет: пĕр парта хушшинче ларакан тантăшĕпе килĕштерсе ĕçлеме (ĕçе пайлама, валеççе илме, пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслеме); черетленсе ĕçлеме; хăйĕн тата ыттисен шухăшне ăнланма, вăл е ку шухăшăн тĕрлĕ енĕсене курма.

**Предметăн шалашĕ (содержанийĕ)**

**«Пĕчĕкçĕ пĕрчĕн» 1-мĕшпе 2-мĕш кĕнекисем**

Чи кĕçĕн шкул ачисем валли вĕсен илемлĕ сăмахлăхпа паллашассин хăй евĕрлĕхне шута илсе 1-мĕш класра литература вулавĕн урокĕсенче усă курма икшер кĕнекепе ĕç тетрачĕ хатĕрленĕ. пĕрремĕш çур çулта ачасен вулав техникин хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитеймен пирки «литература итлевĕсем» ирттерме палăртнă. Ку уроксенче «Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ» ятлă кĕнекепе тата 1-мĕш ĕç тетрачĕпе усă курмалла. Иккĕмĕш çур çулта 2-мĕш кĕнекепе тата ĕç тетрачĕпе ĕçлемелле.

Вĕренӳ кĕнекине официаллă «Литература вулавĕ» ятсăр пуçне тата ятарлă ят та панă: «Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ». Ку ят ăнсăртран кĕрсе ларнăскер мар. Вăл аталану принципĕпе килĕшсе тăрать. Çĕр çинче мĕн пурин пуçламăшĕ пурте - вăрлăх е пĕр пĕрчĕ. Пĕрчĕрен калча сăмсаланать. Калчаран пучах ӳссе çитĕнет, пучах çумне пучах хушсан кĕлте пулса тăрать.

Кĕнекери уйрăм палăртусем: ыйту палли – ыйтусемпе ĕçсем; мăнтăр шрифтлă сăмахсем – ас туса юлмалли ăнлавсем; кăранташпа киçтĕк – ӳкерсе хума тата сăрласа илемлетме сĕннисем; хур тĕкĕ - харкам тĕллĕн хайлама хушнисем. 2-мĕш кĕнекере тепĕр паллă хутшăнать: сăмах енчĕкĕ (ачасен сăмах йышне пуянлатмалли сăмахсем). Уйрăм палăртусен тĕллевĕ - ачасене кĕнекепе хăйсем тĕллĕн ĕçлеме хăнăхтарса пырасси.

Çавăн пекех илемлĕ литература тĕнчи тăрăх ирĕклĕн çӳреме пулăшма 1-мĕш кĕнекене виçĕ, 2-мĕшне тăвата персонаж кĕртнĕ. Кусем ачасен тантăшĕсем Верукпа Тимук тата пысăк ăслă (мудрый) та сапăр кăмăллă ватăсем – Шухши мучипе Мариç кинеми.

Верукпа Тимук çивĕч ăс-тăнлă, туслă ачасем. Вĕсем те 1-мĕш класс ачисем, ачасемпе пĕрлех ӳссе аталанса пыраççĕ. Тем те курасшăн, тем те пĕлесшĕн çунакансем. Тантăшĕсене кĕнеке тăршшĕпех текстсенче хускатнă çивĕч ыйтусем тавра пĕрле ларса шухăшлама чĕнеççĕ, хистеççĕ, хăйсен шухăшĕсене пĕлтереççĕ. Çакă пĕрремĕш класс ачисемшĕн, тин çеç шкул партти хушшине ларнă пепкесемшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен вĕсенчен хăшĕ-пĕри кĕнекепе те шкула çӳреме пуçласан çеç паллашать. Çавăнпа та учебникри хăш-пĕр ыйту вĕсемшĕн кăткăсрах та пулма пултарать. Хăшĕ-пĕри тата пĕр-пĕринпе те тӳрех туслашса та çитеймеççĕ. Хăш-пĕр ачасене хальлĕхе хăйĕн кăмăл-туйăмне сăнаса палăртма та, шухăшĕсене йĕркелесе уçăмлăн калама та çăмăл мар. Çавна пула хăшĕсем калаçăва хутшăнма таименсе тăраççĕ. Çак сăлтавсене шута илсе чылай ыйтăва Верукпа Тимук хуравланине панă. Ку хуравсен тĕллевĕ - ачасене вăл е ку пулăма тишкерме явăçтарасси, тарăнрах ăнланма, хăйсен шухăшĕсене уçăмласа çыхăнуллă, ĕнентерӳллĕ палăртма хăнăхтарса пырасси. Вĕсем ачасемшĕн тĕслĕх вырăнне пулаççĕ. Верук пулăма хĕр ача, Тимук арçын ача куçĕпе пăхса хаклаççĕ. Ачасем майĕпенех пĕр пулăмах тĕрлĕрен куçпа пăхма пулнине, харкамла ăнланни йăнăш пулманнине ăса хывса пыраççĕ.

Шухши мучипе Мариç кинеми ачасемшĕн аслашшĕпе асламăшĕ (кукашшĕпе кукамăшĕ) вырăнĕнче. Мучи нумай пурăннă, илтнĕ-курнă, шӳте-мĕне ăнланакан, хăй те шӳтлеме хирĕç мар ватă. Вăл ачасене урокран урока йăлăхтармасăр ăса вĕрентет, ансат пĕтĕмлетӳсем йĕркелеме сĕмлентерет. Кинеми ачасемпе кăмăл-сипет ыйтăвĕсене хускатать, вĕсем тавра калаçăва явăçтарать.

Пĕрремĕш класра ачасен ансат литература пĕлĕвĕсем те кăштах туянмалла, хăш-пĕр терминсен пĕлтерĕшне ăса хывмалла. Çаксене тума та ачасене Шухши мучиех пулăшса пырать.

Кĕнекери персонажсемпе ачасене малтанхи урокрах паллаштармалла, уйрăм палăртусен пĕлтерĕшĕсене те ăнлантармалла. 1-мĕш кĕнеке «Шкула каяр-ха вĕренме» сыпăкпа пуçланать. Кĕнеке çак сыпăкпа ăнсăртран пуçланмасть. Кунта ачасен хальччен тĕп ĕç-хĕл вăййă пулнине, халĕ вĕсен тепĕр самай кăткăс та этем пурнăçĕшĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ ĕç-хĕле вĕренме пуçламаллине шута илнĕ. Сыпăк тĕллевĕ - ачасене вĕренӳ йĕркипе, ĕç-хĕлĕпе, шкул пурнăçĕпе паллаштарса пырасси, вĕсен вĕренӳ хăнăхăвĕсене йĕркелеме пулăшасси, вĕренес хавхине чĕртсе амалантарса ярасси, тăрăшса вĕренсе пыма хавхалантарасси.

Хайлавсемпе паллаштарнă май ачасене вĕсем ĕнтĕ халĕ ахаль ача мар, вĕренекен пулса тăнине, çавна пула пурнăç йĕрки те, тивĕççемпе яваплăхсем те самай улшăнассине ăнлантармалла. Ачасене вĕренӳ питех те кăткăс, анчах та кăсăклă та илĕртӳллĕ пулма пултарнине ĕнентерсе пымалла. Çак шухăшсене кĕнекери ытти сыпăксенче те тимленĕ.

Илемлĕ литературăпа паллаштарасси икĕ кĕнекинче те халăх сăмахлăхĕнчен пуçланать. Ачасем чĕнӳ-йыхрав юррисемпе, шутлав сăввисемпе, тупмалли юмахсемпе, халăх юмахĕсемпе паллашаççĕ. Иккĕмĕш кĕнекере тата вĕççĕр такмаксемпе шӳтсем хутшăнаççĕ.

Çапларах йĕркелени илемлĕ литература аталанăвĕн логикипе килĕшӳллĕ. Халăх сăмахлăхĕнче тăван чĕлхемĕрĕн сĕткенĕ, чунĕ, пуянлăхĕ упранса юлнă. Вăл хайлавсенче чăн чăваш чĕлхи янăрать. Çакă вара тин çеç шкул алăкне уçнă, пуплевĕ йĕркеллĕ аталанса та çитеймен ачасемшĕн чи пахи.

Çакăн хыççăн кĕнекесенче çыравçăсен хайлавĕсене панă. Тĕп вырăнта – чăваш çыравçисен хайлавĕсем. Вĕсемпе пĕрлех вырăс тата ытти халăх литературисен паха тĕслĕхĕсене те кĕртнĕ. Хайлавсене календарьпе тематика принципне пăхăнса ушкăнланă. Ачасем тин çеç вăйă-кулă тĕнчинчен уйрăлса пыма пуçлани çинчен çырнă хайлавсене кĕнекесенче «Вăйă вылятпăр», «Теттесем», «Пирĕн вăйă-кулă» сыпăксене панă. Ачасене пĕр-пĕринпе килĕштерсе хутшăнма вĕренсе пымаллине, çут çанталăкпа тĕплĕрех паллашмаллине шута илсе икĕ пайĕнче те «Ачасем çинчен», «Чĕр чунсем çинчен», «Тавралăх – асамлă тĕнче» сыпăксем пур.

Хайлавсене йышăнма-ăнланма пулăшас, тишкерме вĕрентес тĕллевпе ятарлă ĕçсемпе ыйтусен системине йĕркелеме тăрăшнă. Ыйтусемпе ĕçсем текста тĕрлĕ енлĕн тишкерме май параççĕ:

- хайлав содержанине сӳтсе явса ăнатарăнрах ăнланма, ăса хывма пулăшасси;
- хайлава итленĕ-вуланă май хăйсем мĕн туйни-шутланине сăнама, сăнлама хăнăхтарса пырасси;
- хайлав темине палăртма сюжетне йĕрлесе пыма вĕрентесси;
- хайлаври сăнарсене уйăрма вĕрентесси;
- хайлав пуплевне сăнама хăнăхтарасси.

Хайлавсене тишкернĕ май ачасене литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе те паллаштарса пымалла. Вĕсем ытларах Шухши мучи пĕтĕмлетĕвĕсенче.

Кĕнекесенче хайлавсен шучĕ уроксен шутĕнчен ытларах. Вĕрентекене программăра палăртнă кашни задачăна татса пама суйламалăх пултăр тенĕ. Калăпăшĕ тĕлĕшĕнчен пăхсан 1-мĕш кĕнекери хайлавсем пĕчĕкрех, вĕсене, тĕпрен илсен, ачасем учитель вуланине итлесе йышăнаççĕ. Иккĕмĕш кĕнекери хайлавсемпе ачасен хăйсем тĕллĕн вуласа паллашмалла.

Аттестаци- вулав хăвăртлăхне тата ăнлану тĕрĕслесси (комплекслă ĕç.)

**«Литература вулавне» вĕрентмелли хатĕрсем шутне çаксем кĕреççĕ:**

1. Т.В. Артемьева, О.И. Печников Литература вулаве (**Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ**): 1 класс.Верену пособийе. – Шупашкар: Чăваш кенеке изд-ви.2008.
2. Кульев О.Г., Кульева А.Р.. Чĕвĕлти: Хушма вулав кенеки. 1 класс. Верену пособийе – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. – 2012
3. Артемьева Т.В., Кульева А.Р. Пуçламăш шкулта литература вулавне йĕркелесси. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. – 2007
4. Т.В. Артемьева, О.И. Печников Литература вулавĕн урокĕсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. – 2009
5. Т.В. Артемьева, О.И. Печников. «**Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ**» электронлă дидактика хатĕрĕ. 2011.